Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

5 (7750) № * Юн кун, 2010 çулхи январĕн (кăрлач) 27-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

**Республикăра**

## Раççей Правительство пуçлăхĕ В.В. Путин Чăваш Ене çитсе курчĕ

Тунти кун Чăваш Республикинче ĕçлĕ визитпа Раççей Федерацийĕн Правительство пуçлăхĕ В.В. Путин пулчĕ. Чăваш Республикин Президенчĕпе Н.В. Федоровпа тĕл пулса вăл территорие пур енлĕн аталантарас, çурт-йĕр тăвас, машинăсем тăвакан комплекса аталантарас ыйтусене сӳтсе яврĕ.

Владимир Владимирович Николай Васильевичпа пĕрле Чăваш патшалăх университетĕнче, пăр çийĕн ярăнмалли керменте, «Промтрактор» акционерла обществăра пулса курчĕ.

**Кун йĕркинче**

## Пĕрлехи кун иртет

Паян ял хуçалăх предприятийĕсенче выльăх пăхакансен пĕрлехи кунĕ иртет. Çавна май фермăсем епле хĕл каçнине пăхса хаклама пур хуçалăхсене те район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсем çитсе килĕç.

Тĕрĕслев вăхăтĕнче уйрăмах фермăсенче юсавçăсен бригадисем ĕçлени, шыв пурри, тислĕк тухни, апат хатĕрлемелли цехсем ĕçлени, ферма ĕçченĕсен канмалли пӳлĕмĕсенчи тирпейлĕх пирки, кадрсемпе тивĕçтерни, ĕçлекенсене ятарлă тумтир пани çине пăхĕç.

**Хамăр инф.**

**ЧР Президенчĕн стипендиачĕсем**

## Пултаруллă вĕрентекен



*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Петр Вячеславович Борзаев Шурча шкулĕнче музыка урокĕсене ертсе пырать. Çак ĕçре вăл вуннăмĕш çул тăрăшать ĕнтĕ. Шкулта маттур пулнипе пĕрлех хастар педагог районти вĕрентӳ пайĕн диагностикăпа консультаци центрĕ çумĕнчи «Çăл куç» çамрăк çемье клубĕн активлă членĕ те. Унăн пултарулăхне кăçал республика шайĕнче те тивĕçлипех хакларĕç: Петр Вячеславович – Президент стипендиачĕ.*

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Районти лару-тăру**

## Сивĕсем пире хăратаймарĕç

***Кăçалхи çанталăк кашнин умнех йывăрлăхсем кăларса тăратрĕ. Чылай вăхăта тăсăлнă шартлама сивĕсене эпир хатĕр пултăмăр-и? Хĕл Мучи кăларса тăратнă йывăрлăхсем умĕнче алăсем усăнмарĕç-и? Çак ыйтусем çине хурав шыраса эпĕ район администрацийĕн чрезвычайлă лару-тăру тата гражданла оборона енĕпе ĕçлекен пай ертӳçипе Н. МИЛЮТИНПА, районти патшалăх пушар надзорĕн пуçлăхĕпе И. СМИРНОВПА, Муркаш районĕнчи пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕн генеральнăй директорĕпе Н. ЛЮБИМОВПА тĕл пулса калаçрăм.***

**Н. МИЛЮТИН:**

– Йывăр вăхăтра этемлĕх яланах мобилизациленет. Кăçалхи сивĕ ытамне лекни те – хăйне евĕр йывăрлăх. Вăл пире хытă тĕрĕслерĕ. Хĕл иртменнине те манма иртерех. Апла пулсан сивĕсем татах пулĕç. Çакна районти чрезвычайлă лару-тăру службин тĕплĕ хатĕрлевре пулни район пурнăçне пысăк инкексемсĕр иртерме май парать. Сивĕсенче районти аварипе çăлав службин мĕн палăртнă ĕçсене тивĕçлĕ шайра туса ирттерчĕ, пулнă инкексене те вăхăтра пĕтерсе лару-тăрăва йывăрлатса ямарĕ. Иртнĕ канмалли кунсенче сивĕне пула Муркаш подстанцийĕнчен Атапай, Оринино, Тереç, Ярапайкасси тăрăхнелле каякан электричество линийĕн 5-мĕш направленийĕнче кăлтăк пулнăран асăннă ялсенче темиçе сехетлĕх электричество çути пулмарĕ. Çавна пула шкулсем, ача сачĕсем, Ярапайкассинчи котельнăй, нумай хваттерлĕ икĕ çурт шăнса ларас хăрушлăха кĕрсе ӳкрĕç. Анчах юсавçăсен бригадисем вăхăтра ĕçленипе çак инкеке сирсе яма май килчĕ.

**И. СМИРНОВ:**

– Николай Панфилович каланипе килĕшетĕп. Пушар хурал ĕçченĕсемшĕн те сивĕ кунсем инкексемсĕр иртмерĕç. Çакна калас килет: çанталăк питĕ сивĕ тăнă май çынсем пӳрт-çуртсене хăйсем ăсталанă электроприборсемпе хутса ăшăтма пуçласçĕ. Чылай чух электроприборсем юсавсăр. Ку вăл – инкексен пуçламăшĕ. Çавăн пекех сивĕ çанталăка пула вăйлă хутнă кăмакасем те «хĕрлĕ автана» çул параççĕ. Çак хăрушлăха çынсен асрах тытасчĕ. Сивĕсенче çăмăл автомашинăсене ăшăтнă чух уçă çулăмпа асăрханусăр пулни те инкексем кăларать. Кунашкал тĕслĕх пулчĕ те ĕнтĕ. Январĕн 24-мĕшĕнче ирхи 7 сехет тĕлĕнче Москакассинче ВАЗ-2114 автомашина двигателĕ çулăм тыткăнне лекнипе юрăхсăра тухрĕ. Электричествăпа ăшăтмалли приборсемпе асăрханусăр пулнипех январĕн 26-мĕшĕнче ирхи 3 сехетре Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнмалли йывăç çурт кĕлленчĕ.

**Н. ЛЮБИМОВ:**

Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх тытăмĕнче сивĕ кунсенче пысăк инкексемех пулмарĕç. Хăшпĕр çуртсенче путвалтан хваттерсене хăпаракан шыв пăрăхĕсем шăнса ларнине те вăхăтра ирĕлтерсе, инкексенчен пăрăнса иртме май пулчĕ.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

**Райадминистрацире**

## Тăрăшуллисене – Хисеп грамоти

***Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2009 çулхи декабрĕн 22-мĕшĕнчи 786 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Галина Алексеевна ГАВРИЛОВАНА**, Ленин ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн машинăпа ĕне сăваканне;

– **Ираида Алексеевна СТЕПАНОВАНА**, Муркаш шкулĕн пуçламăш классен учительницине;

– **Михаил Николаевич КОВАЛЕВА**, Чуманкасси шкулĕн хуçалăх заведующине.

– Районти вĕрентӳ ĕçне аталантарассине пысăк тӳпе хывнăшăн тата йĕркеленĕренпе 125 çул çитнĕ май **«Чуманкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул»** муниципаллă вĕрентӳ учреждениине.

**Пĕчĕк бизнес**

## Конкурса хутшăнăр

Районăн экономика аталанăвĕнче пĕчĕк тата вăтам предприятисен тӳпи çулсерен ӳссех пырать. Муркаш Енре «Пĕчĕк хуçалăх формисене 2007-2011 çулсенче аталантарасси» программа ăнăçлă пурнăçа кĕрсе пырать. «Харпăр хăй бизнесне пуçарса яракан пĕчĕк предпринимательство субъекчĕсене грантсем уйăрса парасси» йĕркепе иртнĕ çул пирĕн районти пĕчĕк бизнесăн икĕ представителĕ федераллă бюджетран 532 пин тенкĕ укçа тивĕç пулчĕç.

Асăннă конкурс кăçал та пулать. Унта хутшăнас текенсен февралĕн 18-мĕшĕччен ЧР Экономика министерствине заявкăсем тăратмалла. Çакна валли ыйту пуррисем район администрацийĕн экономика пайне кĕрсе тухма е 63-2-45 телефонпа шăнкăравласа пĕлме пултараççĕ. Хапăл тăвакансене хаваспах кĕтетпĕр.

**Э. СИМАКОВА,**
**район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ.**

**Кĕскен**

## Мĕнле ят килĕшет?

Иртнĕ çулталăкра пирĕн районти çемьесенче пĕрремĕш ача 205 çемьере, иккĕмĕш ача – 138 çемьере, виççĕмĕш ача – 47 çемьере, тăваттăмĕш – 12 çемьере, пиллĕкмĕш – 2 çемьере, çиччĕмĕш – пĕр çемьере тата саккăрмĕш ача икĕ çемьере çуралнă. Икĕ çемьене аист йĕкĕреш ачасем «йăтса килнĕ».

Ачасен ячĕсене тишкерни акă мĕн кăтартать. Ашшĕ-амăшĕсем Максим (16), Артемий (12), Кирилл (12), Анастасия (17), Дарья (16), Анна (15) ятсене ытларах килĕштереççĕ. Çавăнпа пĕрлех ашшĕ-амăшĕсем е питĕ сайра тĕл пулакан ятсене е çуралнă кунсенчи çветтуйсен ячĕсене пама тăрăшаççĕ хăйсен пепкисене.

Сайра ятсем хушшинче çаксем: Тимофей, Серафим, Семен, Савелий, Радомир, Лука, Игнатий, Доминик, Айрат – арçын ача ячĕсем; Серафима, Фекла, Мадина, Лола, Доминика, Дамира, Арсения, Виталина, Варвара – хĕр ача ячĕсем. Пирĕн районти çĕнĕ кайăксем хушшинче тухăçран илнĕ ятлисем те пулнă: Зулайхо, Амилия, Амина. **Хамăр инф.**

**Саламлатпăр**



Юратнă хаклă мăшăра, çепĕç чунлă аннене, тарават та ырă кăмăллă тăхлачăна, ылтăн-кĕмĕлрен те хаклăрах йăмăкăма – Муркаш салинче пурăнакан **Людмила Петровна ПОРФИРЬЕВАНА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн, ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм ĕмĕр сунатпăр, телейӳпе ăнăçу юнашар çӳреччĕр, ĕмĕтӳсем çитсе пыччăр, çемйӳнте татулăхпа килĕшӳ пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, тăхлачи, аппăшĕсем тата çывăх тăванĕсем.**

Хаклă та юратнă çыннăмăра – Пачкасси ялĕнче пурăнакан **Николай Андреевич АНДРЕЕВА** сумлă юбилей – 75 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Ĕç ĕмĕрĕн пысăк пайне В.И. Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăхра ирттернĕ. Нихăçан та ĕçрен пăрăнман.

Татах та нумай çул пире савăнтарса пурăнма сана çирĕп сывлăх, канлĕ ватлăх сунатпăр. Кун-çулу вăрăм та телейлĕ пултăр, мĕн шутлани пурнăçлантăр.

**Салампа Егоровсен, Петуховсен çемйисем, тăванĕсем.**

Хаклăран та хаклă мăшăра, аннене, хунямана, мамака, асаннене – Шурча ялĕнче пурăнакан **Нина Петровна ФАДЕЕВАНА** 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, канлĕ ватлăх, телей сунатпăр. Хăйĕн ĕмĕрĕнче тем те тӳссе чĕре витĕр кăларнă пирĕн анне, халĕ вара кашни кунпа савăнса тулли пурнăçпа пурăнмалла пултăр. Хуйхă-суйхă, инкек санран аякра тăтăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсемпе прамăнукĕсем, тăванĕсем.**

**2010 çулхи халăх çыравĕ**

## Тĕплĕн хатĕрленес пулать

***Раççей Федерацийĕн Правительствин Президиумĕн 2009 çулхи октябрĕн 29-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе Пĕтĕм Раççейри халăх çыравĕ 2010 çулхи октябрь уйăхĕнче иртет. Çак пысăк пĕлтерĕшлĕ мероприятие хатĕрленес ĕçсем хальхи вăхăта районта епле пыни пирки Чăвашстатăн предприятисен статистикин Муркаш районĕнчи пайĕн тĕп специалист-экспертне З.И. ВИНОГРАДОВАНА каласа пама ыйтрăмăр:***

– Хатĕрленӳ ĕçĕсем мĕнле пынине çырава хатĕрленсе ирттерес енĕпе ĕçлекен районти тата ял тăрăхĕсенчи комиссисен ларăвĕсенче тăтăшах пăхса тухрăмăр. Уйрăмах ялсен адрес хуçалăхне йĕркелесси çине пысăк тимлĕх уйăртăмăр. Мĕншĕн тесен çак тапхăр вăл хатĕрленӳ ĕçĕсен пĕлтерĕшлĕ пайĕ пулса тăрать. 2009 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне çак ĕçе районĕпе пĕтĕмпех вĕçленĕ.

Пур ял тăрăхĕсенче те кашни кил, кашни ял тĕлĕшĕпе çынсен шутне палăртма даннăйсен базине хатĕрлеме çуртсен списокĕсене хатĕрлерĕмĕр. Хальхи вăхăтра районта 2010 çулхи халăх çыравне ирттерессипе йĕркелӳ планне хатĕрлес ĕçсем вĕçленнĕ ĕнтĕ.

Çак кунсенче туса ирттерекен ĕçсем пирки çавна каласа хăварнă пулăттăм. Çырав, инструктор тата стационар участокĕсене вырнаçтарма пӳлĕмсем тупассипе тимлетпĕр. Вĕсем ăçта пуласси çине вара çырав ирттерессипе ĕçлекен комиссисемпе калаçса татăлса йышăнмалла.

Пĕтĕм Раççейри 2010 çулхи халăх çыравне хатĕрленессипе тĕп задача вăл информаципе ăнлантару ĕçĕ пулса тăрать. Çавна май массăллă информаци хатĕрĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлени кирлĕ. Ку енĕпе ятарлă план та туса хатĕрленĕ.

Çырав пирки ятарлă стендсем район администрацийĕн, ял тăрăхĕсен çуртĕсенче, ытти учрежденисенче вырнаçтарнă, вĕсене вăхăтра çĕнетсе тăраççĕ. 2010 çулхи январь уйăхĕнчен тытăнса информаципе ăнлантару ĕçĕ çĕнĕ тапхăра куçрĕ. Халĕ тĕп задача граждансене çырав персоналĕпе тачă çыхăнса ĕçлеме хатĕрлесси пулса тăрать.

Çыравччен вăхăт нумаях юлмасть. Çак пысăк пĕлтерĕшлĕ мероприятие тĕплĕн хатĕрленсе ирттересси статистика оранĕсенчен кăна мар, ытти ведомствăсем, организацисемпе учрежденисем хăйсен тивĕçне мĕнле пурнăçланинчен те нумай килет.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**